# Чӑвашсем йывӑҫран мӗн тунӑ?

Проект ӗҫӗ

Хатерплекенсем: Фомин Станислав, Сергеев Алексей, Михлеев Леонид, Сергеев Дмитрий, Тимофеев Денис

учащиеся 7 класса

МБОУ «Новоильмовская СОШ» Черемшанского муниципального района РТ

Ертсе пыраканӗ: Захарова Марина Анатольевна



# Актуаллăх

- Кашни çыннăн хăйĕн халăхĕн йăли-йĕркине, ĕçне-хĕлне, ĕлĕк, хальхи вăхăтра мĕнле майпа пурăннине, малалла мĕнлерех пурăнассине пĕлмелле тесе шутлатпăр;
- Хамăр алăпа япаласем туни пулас пурнăçра пире кирлĕ пулать.

# Анкета

1.Эсир мĕнле ҫуртра пурăнатăр?

А) йывăҫ Ă) кирпĕчĕ

2. Сире мĕнле ҫурт ытларах килĕшет?

А) йывăҫ Ă) кирпĕчĕ

3. Ҫуртăр валли эсир мĕнрен тунă япаласем илĕттĕр?

А) пластмасран Ă) йывăҫран

Йывăҫ, кирпĕчĕ е пластмасс



# Ĕç тĕллевĕ

- **Йывăçран япаласем ăсталани**

**Проектпа ĕçленĕ май çак ыйтусм çине хурав шырарăмăр:**

- **Чăвашсем йывăçпа ĕçлеме пĕлнĕ-ши?**
- **Йывăçран мĕн тунă?**
- **Хальхи пурнăçра чăвашăн пурнаçĕнче йывăç мĕнле вырăн йышăнать?**
- **Эпир хамăр алăпа мĕн тума пултаратпăр?**

# Ĕçĕн практика енĕ

## Йывăçран япаласем туса курав йĕркелесси



# Меслетсем

- Тĕрлĕ çĕртре информаци шырасси
- Аслисенчен ыйтса пĕлесси
- Шкул музейĕнче тишкерӳ ирттересси
- Укерчĕк, схема, чертёж мелĕсене алла илесси
- Йывăçран япала тунă май тĕрлĕ ĕç хатĕрĕпе ĕçлеме вĕренесси

- Ĕçе тунă май чăвашла клавиатура раскладкине алла илмелле, чăвашла пичетлес тата презентаци йĕркелес асталăха аталантармалла, чăвашла тĕрĕс те илемлĕ калаçма вĕренмелле

# I

Ĕлĕкхи пурнăçра чăвашсем йывăçран мĕн тунă?

Авал чăвашсем кулленхи пурнăçра усă куракан япаласене пĕтĕмпе тенĕ пекех хăйсем ăсталанă. Вĕсенчен нумайăшне йывăçран тунă.

# Вăрман касса хатĕрлени




- Вăрман касса хатĕрлесси арçын ĕçĕсенчен пĕри пулнă. Пĕренесенчен пура тунă, хăма çурнă, кил-çуртра тыткаламалли тĕрлĕ япала хатĕрленĕ. Тураттисемпе хутма, çунтарма усă курнă. Вăрман касса шыв тăрăх юхтарнă чухне пĕренесене йывăç тымарĕсемпе çыхса сулăсем тунă. Хыр тункатинчен сухăр юхтарнă(сăмалапа хăма витнĕ çурт тăррине сĕрнĕ),хурăн тункатинчен вара тикĕт (унпа механизмсен сĕртĕнекен пайĕсене машина çăвĕ вырăнне сĕрнĕ,тир-сăран тунă чухне усă курнă)тата кăмрăк тунă.

# Йывăçран тунă япаласем



- Эпир халĕ усă куракан чылай япалана пластмасран тăваççĕ. Ĕлĕк вĕсене йывăçран тунă. Йывăçран япала тăвасси таврара вăрман нумай пулнинчен те килнĕ.
- Савăт- сапа тума ытларах çăка, хурăн, йăмра тата ытти хăш- пĕр йывăç юрăхлă пулнă. Савăт- сапана касса эрешленĕ. Йывăç хуппинчен тунă япаласене ятарлă хатĕрсемпе çунтарса илемлетнĕ. Ĕлĕкех пирĕн мăн асаттесем токарь станокĕпе усă курнă. Вăл, паллах, электричествăсăр ĕçленĕ.

# Йывăçран тунă япаласем



Курка аврисен формисем тата эрешĕсем кашни çемьере тĕрлĕрен пулнă.

- Кашни çемьере касса эрешленĕ йывăç куркасем пулнă. Пысăккисене алтăр, пĕчĕккисене курка тенĕ. Вĕсем çемье чапĕпе мухтавĕ шутланнă. Курка аврисем çинчи эрешсем çăлтăрсене, сăваплă чĕр чунсемпе кайăксене пĕлтернĕ.

# Йывăçран тунă япаласем




- Чăвашсен куркисем хăйне евĕрлĕ пулнипе ытти халăхсен куркисенчен уйрăлса тăнă.
- Урапа-çуна пайĕсене , çурт-йĕре йывăçран касса тунă эрешсемпе илемлетнĕ. Чÿрече хашакĕсене, хапха юписене уйрăмах илемлĕ касса эрешленĕ.

# Сĕтел-пукан




Пысăках мар чăваш пӳрчĕн ăш-чикки.

Ĕлĕк чăвашсем , Атăл тăрăхĕнчи ытти халăхсем пекех, сĕтеле саксем çӳллĕш çеç тунă, унпа хăш- пĕр чухне çеç, сăмахран кĕл тунă чухне е уявсенче , усă курнă.

Сĕтел- пукана йывăçран ăсталанă, касса тунă эрешсемпе илемлетнĕ. Саксем чи кирлĕ япаласем шутланнă. Вĕсене пӳрт туса пĕтерсенех стенасем çумне касса кĕртсе лартнă. 1,5 метра яхăн сарлакăш саксем çине ларса ĕçлеме те, выртса канма та питĕ меллĕ пулнă. Тӳшек- минтер сарса хурса çемйипех сак çинче çывăрнă. Саксем айĕнче кил- çуртра тыткаламалли тĕрлĕ хатĕр- хĕтĕр усранă. Сивĕ вăхăтра пĕчĕк ачасене урайне яман. Вĕсем кунĕпех сарлака саксем çинче вылянă. Тĕпелти сак айĕнче тĕпсакайне анмалли алăк пулнă. Унта аннă чухне сакăн çӳлти пайне çĕкленĕ.

# Хальхи вăхтра

Йывăçран тунă япаласем ытларах та ытларах малти вырăна тухса пыраççĕ. Йывăçран кĕленче те тума пултарнă ĕнтĕ, ăсчахсем йывăçа «пуласлăхăн материалĕ» теççĕ.



# II

## Практика


Çунтарса тунă эреш
Фомин Станислав эрешленĕ
Мулкач
Сергеев Алексей ăсталанă
Пăлан пăрушĕ
Сергеев Дима ăсталанă

# Практика ĕçĕ

Ӳкерчĕк тăвасси

Кенекесенчен, энциклопедисенчен, словарьсенчен информаци шырасси

Чертёж тăвасси

Хăмана саваласси, касасси, якатасси

Шуруповертпа, мăлатукпа ĕçлесси

Выжигатетельпа ĕçлесси









# Пĕтĕмлетӳ

- Апла пулсан, чăваш халăхĕ ĕлĕкренех нумай япалана йывăçран тунă. Йывăçран тунă япаласем сывлăхшăн усăллă. Хальхи пурнăçра та çынсем çакна ăнланса илсе япаласене ытларах йывăçран тума тăрашаççĕ. Эпир те йывăçпа ĕçлес ĕçе алла илме тăрăшрăмăр.







# Усă курнă литература


1. Елена Енькка «Тăван ен» 5 классем валли, 2008

2. Елена Енькка «Тăван ен» 6-7 классем валли; 2008

М.И. Скворцов «Чăвашла-вырăсла словарь, 1982

Н.И. Ашмарин «Чăваш сăмахесен кĕнеки», 1928